Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

95 (8161) № * Юн кун, 2013 çулхи раштав (декабрь) уйăхĕн 18-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

## Михаил Игнатьев Çырупа тухрĕ

**Ĕнер, декабрĕн 17-мĕшĕнче, Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Республикин Патшалăх Канашне çуллен яракан Çырăвĕпе тухрĕ. Республикăн малашлăх çул-йĕрне палăртакан пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăракан документпа вăл Правительство çурчĕн ларусем иртттермелли пысăк залĕнче паллаштарчĕ.**

**Çавна каласа хăвармалла. Çырăва хатĕрленĕ чухне республикăра пурăнакансен, общество организацийĕсен, граждан обществин ытти институчĕсен представителĕсен шухăш-кăмăлне шута илнĕ.**

**Черетлĕ Çырура Правительствăпа Патшалăх Канашĕн, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен, предприятисемпе организацисен малашлăх ĕçĕ-хĕлĕн çул-йĕрне палăртнă.**

**Çырăвăн тулли тексчĕпе хаçат вулакансене çитес кăларăмра паллаштарăпăр.**

## Указсене пурнăçа кĕртмелле

Декабрĕн 13-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Хусанта РФ Президенчĕн 2012 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи указĕсене пурнăçласси тата Атăлçи федераци округĕн субъекчĕсен 2014 çулхи тата планланă 2015 – 2016 çулсенчи бюджечĕсене шайлаштарассин ыйтăвĕсемпе ирттернĕ канашлу ĕçне хутшăннă.

Канашлăва Раççей Президенчĕн Атăлçи федераци округĕнчи полномочнăй представителĕ Михаил Бабич ертсе пынă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче Раççей Президенчĕн пĕлтĕрхи май уйăхĕнчи указĕсене пурнăçласси пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртнă.

Канашлу хыççăн наци телерадиокомпанийĕн журналисчĕсемпе тĕл пулнă май Михаил Игнатьев çавна палăртнă. Чăваш Ен Раççей Президенчĕн В.В. Путинăн указĕсене пурнăçа кĕртессипе хăйĕн обязательствисене пĕтĕмпех пурнăçлĕ.

Ĕçре хастаррисем

## Çынсемпе тараватă, тимлĕ



*Хальхи вăхăтра пирĕнтен чылайăшĕ универсал электрон карттă хатĕрлессипе тимлет. «Çак карттăна илме ыйтса ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайне ку таранччен 981 заявлени йышăнтăмăр, ĕç хучĕсенчи информацие компьютера çырса пыратпăр», – пĕлтерет ку ĕçпе тимлекен Ольга Яковлева. Социаллă хӳтлĕх пайĕнче Ольга Николаевна 2001 çултанпа, Чăваш патшалăх университетĕнчи вĕренсе тухнăранпа вăй хурать. Ертсе пыракан эксперт специалист çынсемпе яланах тараватă, тимлĕ, йăваш калаçать. Килекен кашни çынна универсал электрон карттăпа усă курни меллĕ те çăмăл пулнине тĕплĕн ăнлантарма тăрăшать.*

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**




## Çулăм чашăкне Владимир Воронков чĕртĕ

Чăваш Ен тĕп хули декабрĕн 27-мĕшĕнче хĕллехи XXII Олимп вăййисен эстафетине йышăнасси пирки пĕлтернĕччĕ. Савăнăçлă акци чукун çул вокзалĕнче кăнтăрла пуçланать. Хыççăн Олимп çулăмĕн эстафети Ленин проспекчĕпе, Николаев, Калинин, Текстильщиксен урамĕсемпе, Çĕнтерӳ паркĕпе иртет. Çавăн пекех И. Франко урамĕнче, Казански набережнăйĕнче, Юхан шыв портĕнче, Речниксен портĕнче, К. Иванов урамĕнче, Мускав проспектĕнче, М. Горький проспектĕнче, Университетская урамра, Павлов мичман, Гузовский урамĕсенче пулать.

17 сехет те 30 минутра Хĕрлĕ площадьре уяв пуçланать. Кульминаци саманчĕ – трактор-шоу тата Çĕнĕ çулăн республикăри тĕп елкине уçни. Кунта Хĕл мучипе пĕрле çамрăксен зарядки иртет. Тепĕр çур сехетрен уявăн тĕп саманчĕ «Олимпийский» тĕп стадиона куçать. Вăл олимп çулăмĕн республикăри тĕп чашăкне чĕртнипе вĕçленет. Çакна тума пирĕн ентеш, Саппоро-1972 паттăр олимп чемпионĕ Владимир Воронков тивĕçĕ.

Информаци кунĕ

## Çырусемпе паллаштарĕç

Паян районта черетлĕ информаци кунĕ иртет. Унăн теми – Раççей Президенчĕн Федераци Пухăвне янă Çырăвĕ тата Чăваш Республикин Пуçлăхĕ республика Патшалăх Канашне янă Çырăвĕ.

Тĕл пулусене кашни ял тăрăхĕнчех йĕркелеме палăртнă. Района информаци кунне хутшăнма республика тĕп хулинчен Чăваш Республикин юстици министрĕн пĕрремĕш çумĕ Ирина Семенова ертсе пыракан ушкăн килет. Вĕсем район администрацийĕн тата федераци органĕсен районти структурисен ответлă ĕçченĕсемпе пĕрле ĕç коллективĕсенче пулса тĕл пулусем йĕркелĕç, çĕр-шыв тата республика ертӳçисен Çырăвĕсемпе паллаштарасçĕ, çынсен ыйтăвĕсем çине хуравласçĕ.

Кĕскен

## Çамрăксем – Патшалăх Думинче

Пирĕн районти çамрăксен суйлав комиссийĕн членĕсем – район хаçачĕн социаллă пурнăç пайĕн ертӳçи Н. Николаева тата ачасен пултарулăх çуртĕн методисчĕ И. Лепешкина республика делегацийĕн йышĕнче Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думине çитсе килчĕç.

Çамрăксем патшалăх депутачĕсен, хăш-пĕр партисен ĕçĕ-хĕлĕпе, Патшалăх Думинчи музейпа паллашнă, çавра сĕтел тавра пуçтарăнса Алена Аршинова депутатпа та калаçăва хутшăннă. Сăмах май пирĕн район делегацийĕ депутата чăвашлăха сăнласа паракан парнесем тата районт çинчен каласа кăтартакан кĕнеке те парнеленĕ.

Мускаври тĕл пулу питĕ усăллă иртнине калаççĕ çамрăксем. «Малашне хамăрăн обществăлла ĕçре усă курма интереслĕ шухăшсем те пухса килме пултартăмăр», – тесçĕ вĕсем. Апла çамрăксен комиссийĕн çитес çулхи ĕç планĕ интереслĕрех пулма тивĕç.

**Г. ЛЮБИМОВ,**
**район администрацийĕн ятарлă программăсен пайĕн пуçлăхĕ, çамрăксен суйлав комиссийĕн ертӳçи.**

Саламлатпăр



Юратнă мăшăра, аннене, кукамая, пирĕн сывăх çыннăмăра – Сентимĕр ялĕнче пурăнакан **Лидия Порфирьевна ЗАЙЦЕВĂНА** сумлă юбилейпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, утас çулу яланах такăр пултăр, ĕмĕрĕ вăрăм килтĕр. Çумра яланах шанчăклă çынсем, умра çутă та ырă кунсем пулччăр. Эпир сана юрататпăр, эсĕ пурри – телей.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕпе кĕрӳшĕсем тата тăватă мăнукĕ.**

Çырăнтару – 2014

## Çак кунсенче çырăнăр!

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2014 çулхи январьтен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ. Вăхăт нумаях юлмасть. Хаçата 6 уйăха çырăнмалли хак – 216 тенкĕ те 30 пус.**

**Хаклă вулаканăм! Малашне те пĕрле пулар!**

# Çанă тавăрса ĕçлениех палăрмасть

Лару

***Йĕркене пăсассине асăрхаттаракан районти комиссин черетлĕ ларăвĕ ку хутĕнче анлă майпа иртрĕ: унта профилактика субъекчĕсемпе пĕрлех ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе специалисчĕсем те хутшăнчĕç. Ларăва район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев ертсе пычĕ.***

Çĕнĕ çулти уяв кунĕсенче халăха хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессси – çитес вăхăтри чи çивĕч ыйту. Çавăнпа та ларура кун пирки чи малтан калаçрĕç. Районти вĕренӳ тата культура учрежденийĕсенче уяв каçĕсене декабрĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа ирттерме тытăнаççĕ. Унччен вара пур объекта та хăрушсăрлăх енĕпе тĕрĕслеççĕ. Çак ĕç пуçланнă ĕнтĕ. Пушар хуралĕн ĕçченĕсем, шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем ирттерекен тĕрĕслевсенче хальлĕхе пысăк çитменлĕхсем пулман. Çапах та шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е. Плечов çак ларутăрура никамăн та лăпланмалла марри палăртрĕ, уяв мероприятийĕсем вăхăтĕнче пур объекта та район администрацийĕнчен тата ял тăрăхĕнчен ответлă ĕçченсене çирĕплетме сĕнчĕ. Кунта каланипе пĕрлех – нихăш ертӳçĕн те хăйĕн çинчен ответлăх илмелле марри пирки çирĕп сăмах пулчĕ.

Уяв кунĕсем халăх дружинникĕсемшĕн те хĕрӳ кунсем пулма тивĕç, анчах та районти 65 дружинникран 12–15-шĕ кăна çак обществăлла ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлать мĕн. Дружинниксене уксан хавхалантарма май пулманнипе ларура çак ыйтăва та сӳтсе яврĕç. «2013–2015 çулсенче Муркаш районĕнче йĕркене пăсассинчен асăрхаттарасси» тĕллевлĕ программăпа пăхса хунă укса-тенкĕрен хавхалантару валли те укса «тупма» май пуррине палăртрĕç.

Пирĕн районти хăрушсăрлăхпа çыхăннă тепĕр программа – 2012–2015 çулсене палăртнă «Хăрушлăхсăр муниципалитет йĕркеленĕвĕ». Çак программăна пурнăçлама иртнĕ çул уйăрнă 472930 тенкĕпе пĕтĕмпех усă курнă – видеокамерăсем вырнаçтарнă, кăçал та 773522 тенкĕпе усă курнă. Видеокамерăсем вырнаçтарнин усси пур – шалти ĕçсен пайĕн ĕç кăтартăвĕ тăрăх преступленисене уçса парасси лайăхланни палăрать. Кунта вара çак оборудованин тӳпи пурри не те калать Е. Плечов. Анчах иртнĕ кунсенче видеокамера пулăшнипе кăна Мăн Сĕнтĕрте пысăк сумма укçа вăрлакана тупса палăртнă. Çапла вара камерăсен пахалăхĕ пĕлтерĕшлине палăртмасăр иртме çук, мĕншĕн тесен ку кашни çыннăн хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă.

Йĕплĕ пралук леш енчен таврăнакансене, условлă майпа айпланнисене тата çакăнпа çывăх ытти хăш-пĕр категорие кĕрекенсене ĕç вырăнĕпе тивĕçтерессси, вĕсен социаллă хăнăхăвĕ те ыйту çине ыйту суратать – лару-тăру лайăх теме çук. Тĕпре вара – çакăншăн яваплă çынсемпе ĕç тăвакан уголовлă инспекци хушшинче çыхăну япăххи.

Полицин участокри уполномоченнăйĕсен ĕç вырăнĕ пирки те сăмах пулчĕ. Ку ыйтупа пĕлтертенпе (ЧР Пуçлăхĕ çумĕнчи Координаци канашĕн 2012 çулхи июлĕн 19-мĕшĕнчи ларăвĕн протокол йышăнăвĕ вăя кĕнĕренпе) пĕрре мар калаçрĕç ĕнтĕ, анчах та хăш-пĕр ял тăрăхĕсенче участковăйсен пӳлĕмĕсене халĕ те тивĕçлĕ шая çитереймен-ха.

Ларăвăн иккĕмĕш пайĕ ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе тата специалисчĕсемпе уйрăммăн иртрĕ. Тĕп ыйтусем çаксем пулчĕç: кăçалхи бюджета пурнăçласси, ял тăрăхĕсене шывпа тивĕçтерессин тата шыв юхса тухассин схемине туса хатĕрлесе çирĕплетесси, ял тăрăхĕнчи хуçасăр пурлăха муниципалитет пурлăхне куçарасси. Юлашки икĕ ыйтупа çыхăннă ĕçсем пысăк калăпăшлă, апла пулин те вĕсене çитес вăхăтрах вĕçне çитермелле. Ларури ĕçлĕ калаçу вара ял тăрăхĕсем çанă тавăрса ĕçленинех кăтартса памарĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Раççей валли çул-йĕр паллă

## Мĕн çинчен каларĕ-ха Президент хăйĕн Çырăвĕнче

**Влаç**

Иртнĕ кĕçнерни кун, декабрĕн 12-мĕшĕнче, Раççей Президенчĕ Владимир Путин хăйĕн РФ Федераци Пухăвне хатĕрленĕ Çырăвне вуласа пачĕ. Кăçалхи унăн Çырăвĕ 10-мĕш пулчĕ. Вăл 1 сехет те 10 минута тăсăлчĕ. Çулталлăк маларах çавна валли ăна 1 сехет те 22 минут кирлĕ пулнăччĕ.

Президент çакăн пирки каларĕ...

**Халăх ушкăнĕсем хушшинчи хирĕçӳсен сăлтавĕсем пирки**

Раççейри халăх ушкăнĕсем хушшинчи хирĕçӳсемшĕн «аморальлĕ интернационал» айăплă. Вĕсен шутне Раççейăн кăнтăрти хăш-пĕр регионĕсенчен тухнă çынлăх туйăмне çухатнă сĕмсĕрсем тата право сыхлав органĕсен сутăнчăк сотрудникĕсем кĕреççĕ. Кунтах хăйсене вырăс националисчĕсем текенсем, тĕрлĕ сепаратистсем. Вĕсем йăлари кирек епле трагедирен те вандализм е юнлă хирĕçӳ валли сăлтав туса хума хатĕр. Çапла шутлать Президент.

Вăл ăнлантарнă тăрăх кун пек хирĕçтăрусене тума хĕтĕртекенсем вара халăх представителĕсем мар, культура тата традици хаклăхĕсене çухатнă çынсем.

«Çакă пирĕн проблемăсемпех çыхăннă. Экономикăпа социаллă пурнăç тата территори аталанăвĕн йывăрлăхĕсен, коррупци, патшалăх институчĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсен тата, паллă ĕнтĕ, вĕренӳ тата культура политикинчи пысăк кăлтăксен витĕмĕ палăрать», – палăртать Владимир Путин.

**Май уйăхĕнчи указсене пурнăçламаннин сăлтавĕсем пирки**

Хăйĕн указĕсене пурнăçласси мĕнле шайра пулнипе Президент кăмăлсăр: «Вĕсене пурнăçа кĕртесси питĕ тăсăлса кайрĕ, çынсем результатсене туймаççĕ».

«Е общественăра кăмăлсăрлăх туйăмĕ çуратма хăтланаççĕ, е нимĕн те тумаççĕ», – хыттăнах каларĕ вăл нимĕнле сăлтава та йышăнас çуккине палăртса. Тепĕр чухне плансемпе тĕллевсене пурнăça кĕртме укçатенкĕ çитменни çине йăвантарма тăрăшаççĕ. В. Путин шучĕпе политикăна ячĕшĕн йĕркеленĕ принципла туса хатĕрлеме май çук. Паллă ĕнтĕ, экономика конъюнктури улшăнма пултарать, анчах та ку вăл тĕллевсен ревизийĕ пирки каласма сăлтав мар. Ĕçлес пулать, ыйтусене татса пама майсем шырамалла, бюджет тата ытти приоритетсене усăмлă палăртмалла.

**Демографи лару-тăрăвне лайăхлатасси пирки**

Кăçалхи январь – октябрь уйăхĕсенче Раççейре çынсен шучĕ ӳснине палăртнă, регионсенчен çуррине ачасем çураласин шайĕ çынсем вилессинчен пысăкрах.

«Кун пек результатсем 1991 çултанпа пĕрремĕш хут пулчĕç. Кусем вĕсем питĕ лайăх результатсем», – терĕ Президент. Уралăн мĕн пур регионĕсенче тата Атăлçипе Инçет Хĕвел тухăçĕн ытларах регионĕсенче ачасем çураласси Раççейри вăтам кăтартуран пысăкрах.

**Вăтам тупăшлă çемьесене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтермелли программа пирки**

Владимир Путин шухăшĕпе пурăнмалли çурт-йĕр политики паян демографи аталанăвĕн пĕлтерĕшлĕ факторĕсенчен пĕри пулса тăма тивĕç. Правительство ку тĕлĕшпе пурнăça кĕртмелли программа хатĕрлет. Унпа килĕшӳллĕн 2016 çул вĕçленнĕ тĕле социаллă мĕн пур инфраструктурăпа шайлаштарнă 25 млн. тăваткал метртан кая мар пурăнмалли хушма çурт-йĕр хута ямалла. Çапла майпа вăтам тупăшлă çемьесем хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма пултарĕççĕ.

«Ку программăна «Раççей çемйин çурт-йĕрĕ» ят пама сĕнетĕп, çапла майпа асăннă проблемăн пĕлтерĕшне палăртас тетĕп», – терĕ Президент 2016 çул тĕлне çуллен хута яракан çурт-йĕр лаптăкĕ 75 миллион тăваткал метртан иртмеллине палăртса. Ку вăл 1987 çулхи рекордлă 72,8 миллион тăваткал метртан та нумайрах.

### *– Эпĕ шанса тăратăп, Раççейре виçĕ ачаллă çемье норма пулса тăма тивĕç*

**Виçĕ ачаллă çемьесем пирки**

«Пирĕн сирĕнпе ача амăшĕн капиталĕпе 2016 çул хыççăн мĕн тăвасси пирки шухăшласа пăхас пулать», – терĕ çĕр-шыв пуçлăхĕ. В. Путин шучĕпе ку тĕлĕшпе регионсен демографи лару-тăрăвне лайăхлатма хăйсен программисене туса хатĕрлемелле.

Çемьере икĕ ача пулсан виççĕмĕшĕ пулмаллах. «Эпĕ шанса тăратăп, Раççейре виçĕ ачаллă çемье норма пулса тăма тивĕç», – Владимир Путин çапла çирĕплетрĕ.

Чи малтанах ача амăшĕсем валли лайăх условисем туса парас пулать. Вĕсем иккĕмĕш е хыççăнхи ача çуратнă хыççăн карьера валли çул хупăнасси пирки ан шикленччĕр.

**Çулленхи диспансеризаци пирки**

Президент çынсене хăйсен сывлăхĕшĕн ытларах тимлеме чĕнсе каларĕ.

2015 çултан тытăнса Раççейри пур ачасен те тӳлевсĕр диспансеризаци витĕр тухмалла, аслисен – виçĕ çулта пĕр хутчен. Медосмотр тăни чир-чĕре маларах тупса палăртма май парать.

Пысăк технологиллĕ медицина пулăшăвĕн пĕлтерĕшĕ палăрмаллах ӳсет. Раççейре юлашки вăхăтра çакăн пек центрсен сетьне йĕркеленĕ. Вĕсен пулăшăвĕпе вара хуласенче пурăнакансем кăна мар, ыттисем те усă курма пултарчăр.

**Тӳлевсĕр медицина пулăшăвĕ пирки**

Президент çапла пĕлтерчĕ. Обязательнăй медицина страхованийĕн системи медицина пулăшăвĕпе тӳлевсĕр тивĕçтерессине гарантилеме тивĕç. Пациент хăйне мĕнле пулăшупа тӳлевсĕр тивĕçтерессине пĕлсе тăтăр, врач вара ăна ĕçĕн мĕнле принципсене пăхса тӳлессе малтанах пĕлме тивĕç.

База ыйтăвĕ – сывлăх сыхлавĕн страхланă принципĕ çине куçасси. Çын хăйĕн сывлăхĕшĕн хăй те тăрăштăр, уншăн ответлă пултăр.

В. Путин çавна та палăртса хăварчĕ. Страхлакан компанисемшĕн медицина учрежденийĕсем пахалăхлă пулăшупа тивĕçтерни пĕлтерĕшлĕ пулмалла. Пациент хăйĕн шухăшĕпе лайăхрах ĕçлекен медицина учрежденине суйласа илме пултармалла.

Хальлĕхе обязательнăй медицина страхованийĕн системи çителĕклĕ ĕçлеймест-ха. Ăна аталантарни медицина услугисен пахалăхне лайăхлатма, врачсен ĕç укçи шайне ӳстерме май парĕ.

**Сывлăха сыхлассин системи тата унта волонтерсен юхăмне аталантарасси пирки**

Президент медицина проблемисем пирки асăннă май ыр кăмăллăх традицийĕсене çĕнĕрен чĕртесси пирки чарăнса тăчĕ.

Владимир Путин Раççейре сывлăха сыхлас ĕç системинче хăйсен ирĕкĕпе ĕçлеме, ку ĕçре пулăшу кӳме кăмăл тăвакансен анлă юхăмне йĕркелеме сĕнет.

Пысăк технологиллĕ медицина операцийĕсен шучĕ Раççейре çитес 3 çул хушшинче 1,5 хут ӳсмелле. Медицина сферинчи çĕнĕ тĕпчевсен шайĕпе ытти çĕр-шывсенчен юлса пыни чыс тумасть.

**Общежитисенче пурăннăшăн тӳлесси пирки**

«Хаксене пĕлĕте çити ӳстерме çук», – палăртрĕ Владимир Путин студентсен общежитисенче пурăннăшăн тӳлемелли висисем пирки асăннă май. Аслă вĕренӳ заведенийĕсен ректорĕсене вăл çакна пĕлтерчĕ. Малашне Финанс министерстви вĕсен тупăшĕсене шута илсе хальхи нормативсене чакарĕ.

**Аслă вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕнĕ чухне сочинени çырасси патне таврăнасси пирки**

Президент çитес вĕренӳ çулĕнчен тытăнса шкултан вĕренсе тухакансем итоглă сочинени çырассине пăхса хума хушу панă. Унăн результачĕсене аслă вĕренӳ заведенине вĕренме кĕнĕ чухне ЕГЭ кăтартăвĕсемпе пĕрлех шута илĕç.

**Пĕр çуртри ача сачĕсемпе пуçламăш шкулсем пирки**

Вĕренӳ тата наука министерстви пĕтĕмĕшле вĕренӳ системинче кадрсене çĕнетсе улăштарассин программине туса хатĕрлес ĕçсене хăвăртрах вĕçлеме тивĕç. Учительсем хатĕрлемелли тата вĕсен квалификацине ӳстермелли пĕр тытăмлă система пулмалла. Вĕсем инвалид ачасемпе хутшăнма тата ĕçлеме пултарни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Владимир Путин тепĕр проблемăна та палăртрĕ. Çитес 5 – 6 çул хушшинче шкул ачисен шучĕ пĕр миллиона яхăн ӳсмелле. Ача сачĕсене тунă чухне çавна та шута илес пулать. Малашлăхра вĕсемпе пуçламăш шкул вырăнне те усă курма май пултăр. Ку вăл ача сачĕсен проекчĕсен хакĕсене ӳстерме тивĕç мар. Строительство ĕçĕсене пĕрле, комплекслă туса иртterессине пăхса хумалла. Проблема пĕлтерĕшне кура кунта федераци пулăшăвĕ те кирлĕ пулĕ.

**Раççей аслă вĕренӳ заведенийĕсенче ют çĕр-шыв çыннисене вĕренме условисем туса парасси пирки**

Президент ытти çĕр-шывсен, СНГ çĕр-шывĕсен гражданĕсене Раççей аслă вĕренӳ заведенийĕсенче вĕренме условисем туса пама чĕнсе каларĕ.

Раççей стандарчĕсемпе ЕГЭ ирттерессипе СНГ çĕр-шывĕсенче те пунктсем йĕркелеме пулать. Калăпăр, вырăс чĕлхин центрĕсен бази çинче. Кун пек экзаменсене пирĕн шкулсенче ЕГЭ иртнĕ вăхăтрах тыттармалла.

**Çĕр участокĕсем уйăрса парассин процедурине ансатлатасси пирки**

Президент законодательствăна улшăнусем кĕртме сĕнет. Вĕсем çĕр участокĕсем уйăрса парассин процедурине ансатлатма тивĕç.

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен çурт-йĕр çавăрма çĕр участокĕсем уйăрса парассипе аукционсем ирттересси усăмлă та пурне те курăмлă пулмалла. Çак ыйтăва çитес уйăхсенчех татса парас пулать.

Кунпа пĕрлех çурт-йĕр тăвакансен та яваплăх пулмалла. Енчен те вăл çĕр участокĕ илнĕ, анчах та строительство ĕçĕсене вăхăтра пуçăнман пулсан, ăна каялла тавăрса пама тивет.

**Раççей традициллĕ çемьене пулăшнине тĕнчере мĕнле хак пани пирки**

Президент шухăшĕпе çемье тата тĕн çине урăхларах пăхассине пурнăçа кĕртни демократие хирĕçле пулăм пулса тăрать. Мĕншĕн тесен ку вăл халăхăн ытларах пайĕн ирĕкĕпе çыхăнса тăмасть.

«Традици хаклăхĕсем – традициллĕ çемье, çын пурнăçĕ, вăл шутра тĕн тĕлĕшпе те эпир тытса пыракан позиципе тĕнчере ытларах та ытларах çын ырлать. Паллах ку вăл консервативизмла позици. Анчах та вăл малалла тата çӳлелле мар, каялла тата аялалла, хаос тĕттĕмлĕхне каялла чăрмав пулса тăрать», – палăртрĕ Президент.

**Студентсен çар хатĕрленĕвĕ пирки**

Кăçал контракт йĕркипе службăра тăракан рядовойсемпе сержантсен шучĕ 220 пин çын чухлĕ ӳснĕ. Президент хатĕрленĕ мобилизаци составне туса хурасси пирки шухăшласа пăхма сĕнет.

В. Путин сĕнĕвĕ çапла: студентсене отсрочка панипе пĕрлех аслă вĕренӳ заведенийĕсенчи çар хатĕрленĕвĕн системине улăштарас пулать. Студентсен вĕреннипе тата çар сборĕсенче пулнипе пĕрлех çар специальноçне те алла илме пултарччăр.

**Çар çыннисене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтересси пирки**

Президент çавăнпа кăмăллă. Çĕр-шыв историйĕнче пĕрремĕш хут çар çыннисене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерессин ыйтăвне татса параççĕ.

«Оборона министерствин 2012 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен черете тăнă мĕн пур çар çыннисене 2013 çул вĕçленичченех пурăнмалли яланлăх çурт-йĕрпе тивĕçтерсе пĕтеретпĕр. Çывăх вăхăтрах ку ыйтăва пĕтĕмпех татса парас пулать. Çапла пулĕ те», – палăртрĕ вăл.

**Вырăнти хăй тытăмлăх, кадрсемпе тивĕçтересси тата вырăнсенчи влаç тытăмне аталантарасси пирки**

Президент вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелессин пĕтĕмĕшле принципĕсене тĕрĕсрех палăртма тата вырăнсенчи влаç системине аталантарма сĕнчĕ. Вырăнсенче вăйлă, пăхăнса тăман, финанс тĕлĕшĕнчен çирĕп влаç пулмалла. Çак ĕçе кая хăвармасăр пуçăнмалла, 2014 çул тĕлне законодательство тĕлĕшĕнчен çирĕплетмелле.

Владимир Путин вырăнти хăй тытăмлăхăн Пĕтĕм Раççейри канашне, муниципалитет йĕркеленĕвĕсене, кĕпĕрнаторсене, Федераци Пухăвĕн членĕсене, Правительствăна çак проблемăсем çине тепĕр хут пур енлĕн çаврăнса пăхма ыйтрĕ.

Вăл каланă тăрăх шăпах ĕнтĕ земствăсемпе вырăнти хăй тытăмлăха аталантарни Раççее малалла татăклă утăмсем тума, пысăк, прогрессивлă улшăнусем пурнăçа кĕртме ăста кадрсем тупма май панă. Халĕ те вырăнти вăйлă хăй тытăмлăх çĕр-шывăн кадр потенциалне çĕнетсе улăштарма хăватлă ресурс пулса тăма тивĕç.

**Ют çĕр-шыв çыннисене ĕçе илме ирĕк паракан патент пирки**

Президент хальхи патент системине улăштарма сĕнчĕ. Хальхи вăхăтра ют çĕр-шыв çынни уйрăм çын патĕнче ĕçлет пулсан патент туянма тивĕç. Предприятисемпе организацисем тата уйрăм предпринимательсем те ют çĕр-шыв çыннине патентпа ĕçе илме тивĕç. Патент хакне вара регионти ĕç рынокĕнчи лару-тăрăва тата территорире пурăнакансен тупăш шайне кура федераци субъекчĕсен хăйсен палăртмалла.

Патент чи малтанах Раççей территорине лайăх пĕлӳ илнĕ, вырăс чĕлхине пĕлекен професси специалисчĕсене килессине хавхалантармалла. Ĕçе пĕлсе йĕркелесен çĕнĕ патент системи миграци юхăмне йĕркелемелли экономика инструменчĕ пулса тăрĕ.

«Пирĕн кунта задача çăмăл мар: эпир Совет Союзĕ пулнă вăхăтри республикăсемпе йĕркеленнĕ хăйне майлă çыхăнусене татăмастпăр, анчах та йĕркене тăвасах пулать», – палăртрĕ В. Путин.

**Ют çĕр-шыв çыннисем пирĕн пата килнине тĕрĕслесе тăрассин витĕмне ӳстересси пирки**

Президент шучĕпе ют çĕр-шыв çыннисен Раççее мĕн сăлтавпа тата мĕн вăхăта килнине патшалăх пĕлсе тăма тивĕç.

Раççей саккунĕсене пăсакансене 3 çултан тытăнса 10 çул таран Раççей Федерацине кĕме чарĕç. Ку вăл йĕркене пăснин йывăрăшĕнчен килĕ. Сĕнекен мерăсем вăрттăн ĕçпе е криминаллă ĕç-хĕлпе çыхăннă ют çĕр-шыв çыннисемшĕн хушма чăрмав пулса тăрĕç.

**Массăллă информаци хатĕрĕсен материалĕсем тăрăх.**

**Район юбилейне хатĕрленсе**

## Кашни илемре – хăйĕн вăрттăнлăхĕ

Декабрĕн 12-мĕшĕнче район администрацийĕн вĕренӳпе çамрăксен политикин пайĕн информаципе методика центрĕнче районăн 70 çулхи юбилейне хатĕрленес енĕпе семинар иртрĕ. Унта хушма вĕренӳ педагогĕсем, ял тăрăхĕн специалисчĕсем, культура тата архив ĕçĕсен пайĕпе тури чăвашсен музейĕн ĕçченĕсем хутшăнчĕç.

Хушма вĕренĕвĕн педагогĕ А. Васильева «Чăваш хĕвелне» ăсталас **(сăн ӳкерчĕкре)** вăрттăнлăхпа паллаштарчĕ. Çавăн пекех В. Карпова, М. Пушкарева, Т. Шерстякова тата ыттисем мастер-класс иртерчĕç. Кашни хутшăнакан кунта хăйне валли усăллине тупма пултарчĕ.

**Р. МАКАРОВА.**



**Юбилей**

## *Саламлатпăр*

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Шупуç ялĕнче пурăнакан **Зоя Васильевна ЦВЕТКОВА** çак кунсенче 85 çул тултарать. Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă аннене, кукамая, мамака сумлă юбилейпа ăшшăн саламлатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. 85 çул тултаратăн пулсан та хушма хуçалăхри ĕçсене пурне те хăвах тума тăрăшатăн, ăçтан вăй-халĕ çитетши санăн? Сывлăху сан çирĕп пултăр, вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатпăр. Эс пурри пире савăнтарать, пурăнма вăйхал парать.

**Саламлаканĕсем: виçĕ хĕрĕ, виçĕ кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, 8 мăнукĕ, 2 кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсем.**

## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельного участка

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды до 49 (сорока девяти) лет из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:060404:214, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:060404, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 2100 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: село Моргауши, улица Мира, дом 6 (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

* * *

**Бурение индивидуальных колодцев и скважин. Кольца колодцев ж/б (замковые, простые) D-0.7;1.0;1.5, крышки днища. Доставка. Установка. Тел.: 8-902-327-82-52. 10-12.**

* * *

**Большесундырскому райпо срочно требуется электрик с 4 группой допуска. Зарплата достойная. Обращаться по тел.: 69-1-79, 69-5-46. 1-2.**

* * *

**Продаются березовые дрова. Тел.: 8-903-065-58-68. 1-2.**

* * *

**ООО «Агрофирма «Путь Ильича» реализует бычков 1–1,5 мес. за 160 руб. за 1 кг., в рабочие дни с 8 до 16 час. Обращаться по тел.: 62-4-11, 8-937-947-67-67. 1-2.**

* * *

**Отдаю щенков в хорошие руки. Куплю солому. Тел.: 8-927-857-98-25.**

* * *

**Продаю автомашину ВАЗ-2107 2006 года выпуска, сигнализация, автомагнитола, механическая коробка передач. Цена договорная. Тел.: 8-960-300-51-64.**

* * *

**Тюкланă утă сутатăп. Пошкар ялĕ. Тел.: 8-903-066-34-58.**

**Внимание!**
**Только 25 декабря!**
**В районном Доме культуры с. Моргауши**
**с 10-00 до 18-00 ч.**
состоится грандиозная ярмарка-распродажа
**КОНФИСКАТ**
Напрямую из портов Одесса (Украина)
- Обувь муж., жен. (осень-зима) - от 550 руб.
- Ветровки, плащи, кож. куртки муж., жен. (осень-зима) - от 750 руб.
- Комплекты постельного белья (бязь) - от 300 руб.
- Пледы, покрывала, подушки, одеяла (бамбук).
- Халаты, футболки, сорочки, майки.
- Нижнее белье, полотенца, носки, колготки.
- Детский трикотаж (Турция, Украина, Россия)
- Спецодежда (камуфляж), шапки, перчатки, варежки.

**ИП Халилов Х.А.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

## УВАЖАЕМЫЕ АБОНЕНТЫ – ПОТРЕБИТЕЛИ ГАЗА!

Постановлением Правительства Российской Федерации от 14 мая 2013 года №410 утверждены «Правила пользования газом в части обеспечения безопасности при использовании и содержании внутридомового и внутриквартирного газового оборудования при предоставлении коммунальной услуги по газоснабжению» (далее – Правила).

Правилами определены, в частности:

- порядок организации безопасного использования и содержания внутридомового и внутриквартирного газового оборудования (ВДГО и ВКГО);
- ответственность потребителя по договору;
- условия и порядок приостановления подачи газа.

Обеспечение надлежащего содержания и безопасного пользования газовыми приборами является обязанностью абонента – потребителя газа. Это достигается, в том числе, и путем проведения технического обслуживания (ТО) оборудования специализированной организацией, с которой абоненты обязаны заключить договор.

В соответствии с Правилами специализированной организацией является газораспределительная организация, осуществляющая транспортировку газа до потребителя по договору о транспортировке газа, получившая в установленном порядке допуск к выполнению работ (оказанию услуг) по ТО и ремонту ВДГО (ВКГО) и имеющая в своём составе аварийно-диспетчерскую службу. Такой организацией на территории Чувашии является ОАО «Газпром газораспределение Чебоксары» (ранее – ОАО «Чувашсетьгаз»), филиалы и газовые участки которого имеются в городах и районах республики. Заключение договоров по ТО и ремонту производится в филиале ОАО «Газпром газораспределение Чебоксары» в с. Моргауши (ранее филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз»), а также при выполнении ТО и ремонта ВДГО (ВКГО).

В случае отсутствия договора на ТО ВДГО (ВКГО), отказа абонентом 2 и более раза в допуске представителя этой организации для проведения ТО ВДГО (ВКГО) возможно приостановление подачи газа на газоиспользующее оборудование абонента. Возобновление подачи газа производится после устранения причин, послуживших основанием для приостановления подачи газа и оплаты абонентом проведённых работ.

Уважаемые абоненты! Соблюдайте правила пользования газом в быту!

В целях бесперебойного и безопасного газоснабжения, а также безопасной эксплуатации бытовых газовых приборов просим Вас обеспечивать доступ работникам газового хозяйства к оборудованию для проведения плановых ТО.

О неисправностях газовых приборов, непригодности дымовых и вентиляционных каналов необходимо сообщать в аварийно-диспетчерскую службу филиала ОАО «Газпром газораспределение Чебоксары» в с. Моргауши по телефону 60 – 2 – 24 или 04.

**ОАО «Газпром газораспределение Чебоксары».**

Лицензия Ростехнадзора от 11.06.2010 № ВП-00-011658 (ЖКС)

**"ВИКТОРИЯ-ОКНА"**
**ЗАМЕР, ДОСТАВКА БЕСПЛАТНО** 1-5.
СРОК ИЗГОТОВЛЕНИЯ 3-5 ДНЕЙ
**АКЦИЯ БАНКА: весь месяц декабрь кредит на окна без процентов.**
ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА
МЕТАЛЛИЧЕСКИЕ ДВЕРИ
НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
ОТ ПРОИЗВОДИТЕЛЯ
ГАРАНТИЯ
КРЕДИТ
РАССРОЧКА
СКИДКА до 35%
7-е окно в ПОДАРОК



REHAU Unlimited Polymer Solutions, brusbox, KBE, ARTEC оконные системы

**Производственный цех, с. Моргауши, ул. Гагарина, 16 а (здание котельной). Тел.: 62-1-20,8-917-662-71-64, 8-937-955-33-00.**

* * *

**Предновогодние скидки на мед цветочный, урожай 2013 года, цена – 250 руб. Тел.: 8-908-309-66-75. 5-10.**

* * *

**СТРОЙМАТЕРИАЛЫ. Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83. 2-10.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 6-10.**

**Спутниковое цифровое телевидение ТРИКОЛОР 200 каналов – 7500 руб. ТЕЛЕКАРТА 50 каналов – 3500 руб. 5-10. Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30.**

**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 5-10.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92.** 30-33.



5-8.
**займы**
- на покупку и строительство жилья с использованием материнского капитала

**АКЦИЯ**
**% СТАВКИ СНИЖЕНЫ до 31 января 2014 года**
**Кредитный потребительский кооператив "Содружество"**
с.Моргауши, ул.50 лет Октября, 23
**62-6-86, 8 900 333 0001**
для пайщиков кооператива

**Консалтинговая компания «ВИКТОРИЯ»**
- * Представительство в судах по всем видам споров;
- * Регистрация, ликвидация организаций, ИП;
- * Подготовка исков, составление договоров;
- * Сопровождение сделок с недвижимостью, в.т.ч. земельными участками: оформление в собственность, в аренду, регистрация;
- * Взыскание по КАСКО и ОСАГО, дела по ДТП;
- *Услуги по оценке имущества;
- * Бухгалтерский и кадровый учет.

Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, офис 119.
Тел.: 62-4-43. сот. 8-903-358-84-64.
г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел.: 44-64-48.
E-mai:l vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru

**АВТОМАСЛА НА РОЗЛИВ**
2-5.
ДИАГНОСТИКА АВТО
ПРИЕМ Б/У АККУМУЛЯТОРЫ
на территории с/х рынка "ЯРМАРКА" д.Сидуккасы
оптом и в розницу
тел. 89603050224 89063853105



elf, Esso, ТНК, TOTAL, Castrol, Mobil, Shell
с 8:30 до 18:00 без выходных

**Цифровое спутниковое телевидение ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 9-10.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ Срок 1 день. Каждый 3 потолок в подарок. Кредит, рассрочка.** 1-5. **Тел.: 8-937-955-33-00.**

**Продаю автомашину ГАЗ-53-Б самосвал, 1979 года выпуска, в хорошем рабочем состоянии, двигатель после ремонта, аккумулятор новый. Цена договорная. Тел.: 8-960-304-28-68.**

**МЕТАЛЛИЧЕСКИЕ ДВЕРИ, ЖАЛЮЗИ, МЕБЕЛЬ НА ЗАКАЗ.** 1-5. **Тел.: 8-937-955-33-00.**

Пора получать скидки по купонам!
**ВРЕМЯ ПРИШЛО!**
1000 КУПОН НА СКИДКУ 1000 РУБЛЕЙ

ЖК Телевизор Thomson T32C30U



32" (81 см)
Поддержка 720p HD
Разрешение 1366x768 (16:9)
Просмотр видео с USB
HDMI-вход
~~8820~~ 7500 руб.

Мясорубка POLARIS PMC0506AD



Мощность 1300 Вт
Система реверса
Защита двигателя от перегрузки
Насадка для приготовления колбас
~~2655~~ 2260 руб.

Стиральная машина LG F-80C3LD



Стирка до 5 кг
Электронное управление
Отжим при 800 об/мин
Защита от протечек
Защита от детей
~~12990~~ 11040 руб.

Внимание! С 16.11.2013 по 16.03.2014 обладатели купонов (которые выдавались с 15.10.2013 по 15.11.2013) могут их реализовать! Вы можете оплатить ими часть стоимости покупки. Скидку можно получить по нескольким купонам, при этом она не может превышать 15% от стоимости приобретаемых товаров. Купон не действителен при оплате товара со специальными ценами (наличием копеечной части 0,50 руб. и 0,30 руб.). ООО «Электрон», г. Канаш, ул. Красноармейская, д. 81, ОГРН 1122134000405

Бытовая техника **Лидер**
ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ
**Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4 (с торца здания Дома быта). Тел.: 62-3-80. 4-10.**

**21 декабря ООО «Межрегиональный Центр Финансирования» приглашает своих клиентов и всех желающих на праздничный концерт чувашской песни и звезд чувашской эстрады, посвященный 2-летию работы отделения №3 в с.Б.Сундырь Моргаушского района. Состоится розыгрыш призов среди клиентов ООО «МЦФ». Вход свободный. Начало в 15 часов. Место проведения – Большесундырский информационно-культурный центр. Справки по тел. 69-3-75, 8-967-473-61-21.**

**20 декабря 2013 г. в РДК**
**С 9:00 до 19:00 час.**
**РАСПРОДАЖА**
**НАТУРАЛЬНЫХ ЖЕНСКИХ И МУЖСКИХ ДУБЛЕНОК!!!**
**РАССРОЧКА ПЛАТЕЖА до 3 лет!!!**
**ПЕРВОНАЧАЛЬНЫЙ ВЗНОС 0%!!!**

Коллектив и ветераны (пенсионеры) отдела Министерства внутренних дел Российской Федерации по Моргаушскому району выражают глубокое соболезнование родным и близким по поводу безвременной кончины

**ТОДИНОВА**
**Виталия Ивановича,**

ветерана органов внутренних дел Российской Федерации.

Пирĕн çывăх, хисеплĕ çыннăмăр, мăшăр, атте

**Виталий Иванович**
**ТОДИНОВ**

пирĕнтен вăхăтсăр ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Çавăн пирки эпир, унăн ачисем, тăванĕсем, пускилсем, пысăк çухатушăн тарăннăн хурланни çинчен пĕлтеретпĕр.

## Прогноз погоды

| | среда 18 декабря | | | | четверг 19 декабря | | | | пятница 20 декабря | | | | суббота 21 декабря | | | | воскресенье 22 декабря | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | -1 | -1 | -2 | -1 | -3 | -3 | -6 | -8 | -10 | -13 | -11 | -10 | -9 | -7 | -5 | -3 | -3 | -3 | -3 |
| Давление мм | 739 | 738 | 739 | 742 | 744 | 745 | 749 | 752 | 755 | 757 | 758 | 757 | 755 | 751 | 747 | 745 | 745 | 744 | 744 |
| Влажность % | 93 | 96 | 90 | 90 | 91 | 90 | 85 | 83 | 84 | 88 | 85 | 86 | 87 | 90 | 89 | 93 | 90 | 94 | 89 |
| Ветер м/сек | 8 | 6 | 8 | 8 | 7 | 5 | 7 | 5 | 3 | 0 | 2 | 4 | 6 | 7 | 5 | 5 | 6 | 5 | 6 |
| | З | З | С-З | С-З | С-З | С-З | С | С | С | ШТЛ | З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | З | С-З | З | З |
| Солнце восход / заход | | 09:20 | 16:18 | | | 09:21 | 16:19 | | | 09:21 | 16:19 | | | 09:22 | 16:20 | | 09:22 | 16:20 | |
| Луна восход / заход | | 17:47 | 09:29 | | | 18:47 | 10:05 | | | 19:51 | 10:35 | | | 20:57 | 11:00 | | 22:04 | 11:21 | |

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ" Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкрах хисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 17.12.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4810.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.